Иванов К.В. Вăранăр, тапранăр!; Хальхи самана; Ватă вăрман шухăшĕ; Сăпка юрри; Кĕркунне : [сăвăсем] / К.В. Иванов // Пионер сасси. – 1940. – 18 юпа.

# Вăранăр, тапранăр!

## (ВЫРĂС ХАЛĂХ ЮРРИ ТĂРĂХ ÇЫРНĂ)

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче;
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ,—
Ак сире улпутсен ырлăхĕ!

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине хăпарттăр,—
Малалла, малалла, малалла!

Хресченсем çĕрсĕр пит аптăраççĕ,
Улпутсем уншăн питĕ хавас;
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме.

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине хăпарттăр,—
Малалла, малалла, малалла!

**К. В. Иванов.**

**1906 ç.**

*

# ХАЛЬХИ САМАНА

## (С Ы П Ă К)

*... Çитменнине çын çине*
*Çитмен пурнăç çитрĕ çав.*
*Йывăр кунсем килчĕçĕ,*
*Выçлăх çулсем çитрĕçĕ.*
*Çĕрĕ тăвăр, тыр ÿсмест,*
*Тăранма та çитеймест.*
*... Чăтаççĕ-ха чăвашсем,*
*Вĕçне çитмен-ха вĕсем.*
*Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,*
*Ĕçсе-çисе ларнă чух,*
*Юррисене юрлаççĕ,*
*Куççулĕпе кулаççĕ.*
*Чăваш! сана ун чухне,*
*Чуну çĕкленнĕ чухне*
*Мĕн пит асна килет-ши?*
*Мĕн чунна хĕсет-ши?*
*Савăнăç-и, куççуль-и*
*Сан куçăнта куç тулли?*

**К. В. Иванов.**

1908 ç.

# Ватă вăрман шухăшĕ

Асап килсен, хĕн килсен
*Шухăшласа ларатăп:*
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе карĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕк-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

# САПКА ЮРРИ

Çывăр, ачам, çывăрах!
Ыйху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм эп
Ăмăрткайăк, çил, хĕвел.
Ăмăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне,
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.
Çилтен ыйтать амăшĕ:
—Ăçта эсĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и,
Е хумсене çапрăн-и?
—Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм —
Ун сăпкине сиктертĕм.

# Кĕркунне

Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Вĕçен кайăк сассинчен
Хуйхă кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайăксем
Вĕçет тинĕс леш енне.
Тăхăннă ав, йăвăçсем
Пуфте сарă тумтирне.
Хĕвел кулать сайралах,
Шăрши пĕтнĕ чечексен,
Йĕрсе ярĕ ак часах
Сивĕ-хаяр хĕл çитсен.